**Шанчăк**

(сăвă)

Çилпеле уран вăрман, эс манăн,
Эп санран нихçан уйрăлас çук.
Эх, суха — çӳхе юлташ, эс канăн,
Маллахи çул пирĕн — сансăр çул.

Малашне çул пирĕн — çут прожектор,
Çуттипе йăл-йалăн çуталать.
Малашне юлташ ман тимĕр трактор,
Эс ăна, уй-хирĕм, ытала.

Вăл сана нимле сиен те тумĕ,
Çисе ямĕ ешĕл илеме.
Хальхи пекех пулăн çăмăр умĕн,
Çăмăр хыççăн уçăн çăл куçне.

Шăп шуса пыран тăртаннă уйăх
Пулĕ саншăн — тырă путавкки...
Пыл-çу пекех тутлă пулĕ ыйăх,
Ав кулать хĕвелĕ — сар инки.

Ан хăрат мана, кĕрхи çанталăк,
Ан кала мана: суян тесе.

Халь мана та ыталарĕ шанчăк,

Халь эп хам пурнап хĕпĕртесе.

Эп шанап. Совет çĕрĕ вăйланнă,

Раççей çĕрĕ тасалнă тусанран.

Юнпа варланнă черкки те ваннă,

Ун вырăнне çĕн çурт — çĕн самана.

Эп манман. Тăван çĕршыв аманнă,

Улăм ялăн çитсă пит сахал.

Анчах халь — ялпа хула авланнă,

Вăл ман çĕршывшăн — ăраскал.

Эп шанап, шанап — сад чечекленĕ,

Эп шанап пулас çĕн пурнăça.

Çĕр мунча тăрри хĕвелпе ĕннĕ,

Çĕр мунча халь тухнă прахăça.

*Рзай, В. Шанчăк : [сăвă] // Рзай, В. Çырнисен пуххи / В. Рзай. – Шупашкар, 2004. – С. 57-58.*